3—4-мĕш № ● Хакĕ 15 пус ● Май 1932-мĕш çул.




**Сылтăм оппортунис:**—Епĕ Çĕмĕрле кăмпинаçĕ пуласçине те шансах пĕтереймен халĕ, вĕсем Атăлстрой тăвасшăн...

# Укçасем çыраççĕ

Кăнтăрла çутатат̆ хĕвел. Çĕрле—уйăх. Çулла çăмăр çават̆. Хĕлле—йур. Кăна есĕр пĕлетĕр. Ененетĕр. Ађаранпах сăнанă ăна.

Анђах пур тĕнђере хăйаматла çынсем тутисенђен сĕлехем сирĕнпе тавлашаççĕ. Иăнăшагăн есĕ, краштанин, теççĕ. Хĕвел шăп çурçĕрте çутатат̆. Уйăх—кăнтăрла есĕр ĕçленĕ ђухне пăхат̆. Йурĕ вăл кирек хăçан та шăрăх ийуњпе ийуљ уйăхĕсенђе çума йуратат̆. Çумăрĕ çинђен калас пулсан, çапла каламалла: вăл хăйамат теккапĕрпе йанвар уйăхĕсенђе шартлама сивĕсенђе çума йуратат̆, теççĕ.

Мыскара тăвас тесе каламастпăр епĕр кăна. Ун пек етемсем пур тĕнђере, çук мар. Вĕсем—Варшавра, Перлинра, Паришра, Лонтăнра, Нйу-йоркра, тата ытти столитсăсенђе пурăнаççĕ. Вĕсем унта, буршуаçи хаçаđĕсен ретаксийĕсенђе лараççĕ. Тӳле кăна,—вĕсем тăп тăрă кунран çĕр туса хураççĕ, прохвосран—анкĕл, шулĕкран—тӳрĕ çын тăваççĕ. Кам нумайрах тӳленĕ,—вăл хаçат хуçи пулса тăрат̆. Кам хаклăрах тӳленĕ—вăл çав перопа ĕçлекен вăрăхурахсен патши пулат̆.

Амерĕкри револђутсиллĕ писсаттĕл Ептон Çинклĕр теминçе çул ĕлĕкрех „Укçасем çыраççĕ" йатлă кĕнеке çырса кăларнăђĕ. Пит паллă фактăсемпе пит нумай токкумĕнтсем пур вăл кĕнекере. Çинклĕр, капиталисăм пиђеђĕ хăйне хăй сутса пурăнни çинђен, пит уççăн кăтартса парат̆.

Кашни трес, кашни çинтиккат, кашни панк, кашни фирмă пĕрпĕр ретаксийе, йе уйрăм шурналиссене сутăн илсе хурат̆. Сăмахран, икĕ кăлпасси хапрăкĕ пĕрпĕринпе питĕ вăйлă конккурентси тăваççĕ пултăр. Пĕр хапрăкĕ укçа тӳленĕ хаçата, тепри хытса тăнă. Хăйне укçа тӳленин кăлпасси çинђен хаçат мухтав кимнĕсем каласа йурлат̆. Вăл кăлпасси мар—çăвар тути. Вăл кăлпасси мар—хырăм канлĕхĕ. Тепĕр фирмăн кăлпасси ниме те йурăхсăр. Вăл фирмă кăлпассисене вилĕ кушак какайĕнђен туса сутат̆. Ăна çийекенсем вилеççĕ. Ан çийĕр!—тет. Укçасем çыраççĕ.

Укçасем пур ытупа та çыраççĕ—сутуилӳ, промышлĕннăç, типломатти, политтĕк ыйтувĕсем тăрăх çыраççĕ. Çав-çав шахтă хуçин кашни кунах шахтăсем ишĕле-ишĕле анаççĕ, теçеткешер рапођисем вилеççĕ. Анђах хаçатра ĕçлекенсем ун çинђен çырмаççĕ. Çырма йурамаст̆, мĕншĕн тесен шахтă хуçи вĕсене укçа тӳленĕ. Шахтăсенђе ĕçлекенсем лантăш курăк пек ђеђекленсе илемлĕн курăнаççĕ, тесе çырма çеç пултараççĕ вĕсем. Шахторсем питĕ аван пурăнаççĕ, мăнтăр, сывă...

Укçасем çыраççĕ!..

Мĕн ђухлĕ хут, мĕн ђухлĕ перопа ђернил пĕтернĕ буршуаçи ретаксисем пирĕн Совет сойусĕнђе пулса иртекен „хăрушлăхсем" çинђен çырса. Кашни листа хутшăн, кашни ђернил тумламĕшĕн ылттăнăн тӳлеççĕ. Кăпиталиссем, импприалиссем, прохвоссем пролеттари тиктаттурĕ çĕршывĕпе кĕрешмешкĕн тăкак кăларма хытса тăмаççĕ. Çырăр, ађсемсĕр! Пуçран шухăшласа кăларса çырăр. Совет сойусĕнђи рапођђисемпе хресђенсене нумайрах варалама тăрăшăр. Мĕн ђухлĕ тислĕк кăларса тăраççĕ вара унта буршуаçи хаçаđĕсем кунран кун намăса пĕлмесĕр. Мĕн ђухлĕ суйа.

„Мускавра Театраљнай плошђетре вĕлернĕ çынсем шашанĕ-шашанĕпе выртаççĕ".

„Çăмăл кăвалерин пăлханакан ђаçĕсем Кремĕле тытса илсе çĕнĕ правиттĕлствă тунă".

„Атăл хăй çыранĕнђен тухса Смоленскпа Харккăв хулисене шыв айне тунă."

„Вăйлă çилтăвăлпа Капкас тăвĕсем çурçĕрелле, Архăнкĕлска куçса ларнă."

„Колхоçнĕксем çапла постановлени йышăннă: помешђĕксене каллех хăйсен ĕлĕкхи именисене тавăрănма ыйтас тенĕ.»

Нимĕнле Макнитокорскипе Тнепростроӣ та çук—вĕсене полђшевиксем пуçран шухăшласа кăларнă.

Çавăн пек „Новăççемпе тултарса пыраççĕ буршуаçи хаçаđĕсем хăйсен страњитсисене.

Йаппони Китайа тапăнђĕ. Йаппони Манђшурине хăй аллине туртса илђĕ. Китай хулисемпе йалсене вутпа йун ăшне путарђĕç Йаппони импприалисĕсем. Йаппони офитсерĕсем хушнипе Китайри лăпкă пурнакан халăха—стариксемпе хĕрарăмсене, тата ађа-пăђасене темиçе çершерĕн, пиншерĕн пере-пере вĕлереççĕ. Анђах Йаппони влаçĕсем буршуаллă кореспонтентсене, тата хаçат кăларса тăракан ретаксисене те сутăн илнĕ. Çавăнпа мĕскĕн Йаппони ку ĕçре пĕрре те айăплă мар пек туйăнат̆ те ĕнтĕ. Йаппонин айăпсăр кенералĕсене хĕсĕрлекеннисем вĕсем китайтсăсем хăйсемех. Хăйсене вĕлерекеннисем, тата хăйсен хулисемпе йалĕсене ђĕртсе çунтарса йараканнисем те китайтсăсем хăйсемех, теççĕ. Йаппони импприалисĕсем кирек хăçан та, кунĕн-çĕрĕн çĕр çине канăçлăх кӳрессичинђен çеç шухăшлаççĕ пулат̆.

Ђикĕн леш йенђи пиђет пуртеши çавăн пек вакăн та, куртăмăн та кăпиталиссене сутăнса пурăнат̆. Çук пурте мар. Ђикĕн леш йенђе рапођисемпе револђутсиллĕ хресђенсен хаçаđĕсем те пур. Буршуаçипе вĕсен йыттисем—сотсиал фашиссем комунниссен хаçаđĕсене конфискатси тăваççĕ, арĕслеççĕ, хупа-хупа лартаççĕ, сотрутнĕксене арĕслеççĕ. Мĕншĕн тесен вăл хаçатсем ђăннине тӳррĕн калаççĕ, буршуаçин вăрă хурахла ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларса пыраççĕ.

Совет сойусĕнђи пиђет, Совет çĕршывĕнђи рапођисен, колхоçнĕксен, тата ĕçхресђенĕсен пиђеђĕ çеç ĕççыннисемшĕн ĕçлесе пырат̆, пролеттарисен тиктаттурине çирĕплетме пулăшакан ђи вăйлă хĕçпăшал пулса тăрат̆. Вăл пиђете пĕђђен çынсем мар, сотсиалисăм тăвакансен йышлă мĕлйунĕсем туса тăраççĕ.

**Рыклин.**

# Атăлстрой



Шăп кăнтăр тĕлĕнҍе ăмăртмалла авăтаççĕ автансем.

— Кукуреку-у-у!

— Кукуреку-у ук!

— Кĕркури алли-вилми-и-и-и!

— Какака какакака-аа!—вĕçĕмсĕр хыраççĕ пырĕсене мухтанса йăва çинҍен аннă ҍăххисем.

—Но-о-о! Килте ўстернĕ выҍăх та хамăр майлă мар,—хытланса турткаланă пек шăват çамрăк кĕсрине хĕтĕртсе куштан Йакку,

—Çĕртме çине тăкатăним ку навуса, Йакку Йаккăлҍ.—Куштан Йакку хыпаланнине кура сăмах хушрĕ кĕтўçĕ Кĕçтенкки хирĕç пулса Йаккăва.

— Çĕртме çини каҍки... Çавăнти çырмана кай-:а пытарас тетĕпха,—лашине тăратсах йумаха тытăнҍĕ Йакку.

—Мĕнле пытарас?—тĕлĕнҍĕ Кĕçтенкки.

— Лаша кантармалла кăна каласа хăварамтаха :ана. Пайан çĕр çывăрмасăр турттаратăп, Кĕçтен-:и ывăлăм,—хăш хуйхăрса лăпланнă пек пулҍĕ Йакку.

— Хăвăр пĕлетĕр пулҍ,—малалла утма тытăнҍĕ Кĕçтенкки.

— Ан кайха, ан кай, ывăлăм! Есĕ пĕлместĕн пу-.ĕха. У-ух, Çармăсра, аҍам, тĕлĕнсе кайăн,—ĕнен-ермеллех калаçма тытăнҍĕ Йакку.

— Ĕнер кăна пултăм Çармăсра. Нимĕн те курарăмçке. Мĕн ара?—ҍарăнҍĕ Кĕçтенкки.

— Улăм пĕрҍи куртăни Çармăс хушшинҍе?—асарıăк ыйту паҍĕ Йакку

Ҍылайҍҍен шутласа тăҍĕ Кĕçтенкки. Анҍах ниăш тĕлте те улăм курнине аса илеймерĕ. Çавăн-а та каламалла пулҍĕ тўррипех:

— Курман, Йакку Йаккăлҍ.

— Туттă çав. Унта ĕнер милитси пулнă та улăмемпе навуссене йăлтах прăттуккул çырса тийет-:рсе кайнă,—вăрахăн вырнаçтарса хуҍĕ хăйĕн ймахне Йакку.

Ку вăхăтра Кĕçтенкки ҍăнах та аса илҍĕ çарăссен ĕçне. Ĕнер ҍăнахах та пулнă Çармăсра милитси. Ҍăнах та çырнă пратуккул. Ҍăнах та раттарнă урамсене улăмран, вутшанкăран, навусран.

— Пушартан сыхланас тĕлĕшпе тунă ăна Çарăсра,—хирĕçлерĕ Кĕçтенкки.

— Пушартан... Пушар мĕнне пĕлейместĕн халҍ ппин есĕ,—вăрăмăн ҍăсрĕ Йакку.

— Как пĕлместĕп. Ара Хапăсра икĕ кил çунҍĕ алҍ кăна.

— Мĕн каласшăн ес мана?—çиленсех хăпартрĕ ассине Кĕçтенкки.

— Акă мĕн каласшăн. Пушарпа çунас тени ҍăнăн вутпкварпа çунмалла тенине пĕлтермест вăл. Вутсăр-кăварсăр çунма та пулăť. Атăл пĕвелемелле тенине илтнĕ-и?

— Илтнĕ.

— Вăт, мĕн пур улăмсене, навуссене Атăл пĕвелеме илсе каймалла. Çуртсене Атăл пĕвеленĕ çĕре йупасем лартма илсе кайаççĕ.

Хамăра—ĕçлеме. Асту—укçасăр. Ан ман. Никама та ан кала. Хăвна ху пĕл. Но-о-о!—уттарҍĕ Йакку лашине малалла.

Ҍылайҍҍен шутласа тăҍĕ Кĕçтенкки калаçнă вырăнта:—Мĕн тăвас? Турттарасим хамăн та, йулашки улăма çырмана. Турттарас!—татăклă ĕç татрĕ Кĕçтенкки.

Ҍăхсемпе автансем каштасем çине улăхнă вăхăтра пĕтĕм йал хускалҍĕ ĕçпеле. Пурте турттараççĕ навус, улăм йал хысăнҍи тарăн çырмана.

— Опесаттĕлни преми илеп районра. Хам каламасăр хатĕрленеççĕ çĕртмене,—халăх ĕçленине кура савăнаť претçетаттĕл.

— Хыçалти мăн çырмана пĕве пĕвелеççĕим вара, Хриссан?—сертерен тавăрăннă ҍух курнине каласа паҍĕ претçетаттĕле арăмĕ.

— Мĕн?—тĕлĕнҍĕ претçетаттĕл.

— Улăмпа навус тултарнă туллийех,—ăнлантарҍĕ арăмĕ.

— Иван Никколайҍ карас пĕви тăвасшăн пулмалла,—колхос правлени претçетаттĕлне аса илсе çиленсе тухса ҍупрĕ претçетаттĕл.

— Иван Никколайҍ утса пыра параť урампа. Шапах хирĕç пулҍĕç икĕ претçетаттĕл.

— Ты што, матĕр кантăр вăрри, мансăр пĕве пĕветĕн?—пĕсехерен йарса тытрĕ претçетаттĕл претçетаттĕле.

— Нимĕн те пĕлместĕн,—шапах ҍарăнҍĕ колхос претçетаттĕлĕ.

— Улăмпа навуса ма турттарттартăн пайан кунĕпех тарăн çырмана?

— Епĕ есĕ хушнă тесе,—аран çăварне уçрĕ колхос претçетаттĕлĕ.

— Есĕ мар, еппин.

— Епĕ мар!

— Есĕ те мар?

— Çук!

— Тавай йĕрлетпĕр!

— Тавай!

Икĕ кунтан йĕрлесе тупрĕç ĕçĕн йĕркине.

. . . . Улăмпа, навуспа пĕвелемеççĕ ăна Атăла. Петтонпа, тимĕрпе пĕвелеççĕ,—ăнлантарҍĕ халăх çинҍе претçетаттĕл.

— Тахçанах ăнлантармалаҍҍĕ çапла,—çиҍ-саккăр сасă илтĕнҍĕ хыçалтан.

— Йалтан йамалла Йаккăва, мĕн пăтратса çўрет вăл халăха!—кăшкăрҍĕ халăх пĕр харăс.

— Кўçран çўхатас мар, пĕлтерес милитсийе,—пырса тăҍĕ Йакку çўмне Кĕçтенкки.

Милитсипе ҍаплăн ăсатрĕç Йаккăва йалтан.

Ку пĕр йалта.

Сирĕн йалта мĕнле пурăнаççĕ Йаккусем, йулташсем!

**Ç. Шăпҍăк.**




# Ентип уйавĕ

Пупсене, кăпиталиссене, кулаксене, пыршă-пакартасене, реçинкă пек сарăлакан хăмпусене савăнтаракан мăнкун çитес умĕн, пирĕн йалти йетинолиђнĕк Йехрем Ентипĕ икĕ пăт салатран сăра тунă, çăмарта хĕретнĕ.

Калас пулаť—кăçал мăнкун майăн 1-мĕш уйавĕпе пĕр ђислара килђĕ. Мăнкун кĕлли тăрса килнĕ хыççăн, Ентип лашине тăвараť те, христос ђĕрĕлнĕ йатпа арăмне ыталаса илсе ђуптăвас шухăшпа, пÿртелле йухаť. Анђах арăмĕ вырăнне алăк хăлăпне ђуптуса илмелле пулаť (питĕрсе кайнă алăка). Латнă çăрауççи ăçтине пĕлет Ентип.

Вăхăт нумайине кура, Ентипăн пыршă пакартисен тăпăрђă йĕкерђи çийес килекен пулса кайнă. Анђах арăмĕ пĕçерсе хăварман. Кăмаки сивĕ. Тип çăкăрах кавлеме тиврĕ.

Унтан... тĕп сакайĕнђен пĕђĕк ђăм сăра тухса ларђĕ сĕтел çине. Курки те тупăнђĕ. Ентип, арăмĕ вырăнне тулли куркана „христос воскрес туса“ илђĕ. Унтан куркине çăварĕ тĕлĕнђех ÿпĕнтерсе унăн ăшĕнђи сăрине пыр шăтăкĕ витĕр йухтарса хырăмне йаđĕ.

Виç-тăват курка тĕплесен, тулта пÿртум алăкне шакăлтатни илтĕнђĕ.

Камши ку?

Вайсăрăн уçăлнă пÿрт алăкĕнђен 8—9 çулхи сарă пуçлă ађа кĕрсе тăђĕ.

— Ентип муђи!—терĕ ађа хашкаса.—Колхоçнĕксем есĕ пайан мĕн ĕçленине пĕлме йаđĕç.

— Мăнкун кун кам ĕçлет!

— Колхоçнĕксем ĕçлеççĕ. Сире те ĕçлеме ђĕнеççĕ.

— Мĕн ĕçлемелле?

— Кам мĕнле алăсти ĕç пĕлет—çавна тăваť. Есĕ акă çăпата тума пултаратăн—çăпата тăватăн. Пушăтне параççĕ. Çăпатине хулана леçетпĕр. Ĕçленĕшĕн укçа илместĕн—патшалăха паратăн. Панă ђухне: çак епĕр ĕçлесе тупнă укçапа йероплансем, танксем, тупăсем тăвăр. Вăл хатĕрсемпе йут патшалăхри пуршуйсем тапăнсан усă курăпăр, тесе калăпăр...

— Хĕрлĕ çăмарта парасшăнђĕ те сана!—терĕ ађана пуçран ађашласа Ентип.—Анђах есĕ „христос ђĕрĕлнĕ“ тесе ђуп тума манса кайнăçке мана.

— Ђуптусан ђир йерме пултараť,—терĕ ађи Ентип куçĕнђен тÿрĕ пăхса.

— Апла пулсан кай, кай кунтан!—тесе тĕртсех кăларса йаđĕ Ентип ађана.

Мĕн тăвас? Пĕђђен ĕçсе ларма киђем—ни сăмах вакланмасť, ни какриш килмест.

— Тавай кайас Кĕркури патне.

Кĕркури витре тĕплесе лараť. Ентип ун умне пырса тăрса:

— Христос воскрес!—тенĕ тутине мăкăртса.

— Сана ђуптума хăçан иксĕмĕр САКС-ра çырăнтăмăрха? Пăрах ђуптăвас йăлана.

— Айта ман пата мăнкун сăри ĕçме.

— Куран ĕçлетĕп.

— Пайан вĕт мункун,—тĕлĕнђĕ Ентип.—Мĕн асапланса ларан ес?

— Хамăрăн çĕршыва сыхлама укçа туса парас тетĕп.

Ентип пÿрт алĕкне шон! хупса вĕççе тухрĕ, картусне те тулта тин тăхăнђĕ.

Хĕлĕп патнелле уттараť.

— Вăл ăслă сынђĕ.

Хĕлĕпĕ те, арăмĕ те атă çĕлеме кайнă колхоç маçтерскойне. Пĕр ађи çеç ђирленипе киле йулнă.

— Христос ђĕрĕлнĕ!

— Ђĕрĕлнĕ пулсан хĕвел ăшшине кăларса типĕтес пулаť, ахалĕн татах ђĕрĕлсе кайма пултараť...

Ентип пÿртрен тухса кайни те курăнмарĕ, ђирĕ кÿре çапнă латăн шăрши çеç тăрса йулђĕ вăл кайнă хыççăн уçă пÿрте.

Ункă Петĕрĕн пур çемйи те ĕçре.

— Христос воскрес!

— Кăваcђĕреслене çÿремелли вăхăт мар халĕ.

Лохăл-лохăл кулаççĕ Ентипран Ункă Петĕр çемйисем. Пÿртрен тухнă ђухне Ентип, ытлашши шухăша кайнипе, хăйĕн урисем пуррине манса кайнă. Манса кайнă пирки, хăрах ури алăк айне хĕсĕнсе йулма хăтланђĕ.

Урамра аналалла кайакан пуçанине кураť.

— Пуçана!

— Мĕн?

— Ан кайха. Христос ђĕрĕлнĕ!

— Ну-у!

— Мĕн „ну“. Мăнкун кун кашни çулах христос ђĕрĕлнине пĕлместĕни?

— Ђĕрĕлнĕ пулсан халĕ ăçташи вăл? Колхоз витине тума илсе кайасђĕ. Вăйĕ пулĕха унă ђĕрĕлнĕскерĕн. Ђутлама пултараймасассăн, пĕрне несем йатса патăр.

Пуçана та ухмаха тухнă. Кайап хам пек колхоç кĕмен Петĕр патне.

— Ман килес.

— Килех.

— Христос воскрес!

— Хострест? Мĕнле трест?

— Ара, мăнкун пайан.

— Мăнă кун çав. Майăн 1-мĕшĕ. Пĕтĕм тĕнђипе ăна ĕççыннисем уйавлаççĕ. А есĕ мĕн вара сулăн çÿретĕн пайан! Ĕçлесе парас темерĕни. Напрасна Совета сыхлас ĕçре пире йетинолиђнĕксене колхоçнĕксенђен йулни килĕшмест...

Ку та ыттисем пекех.

Ниҫта мӑнкун тупас ҫуккине сиссе, сӑмсине кил йенелле турӗ те, уттара паҙӗ малалла. Хӑйпе пӗрле колхос арман ҙулӗнҙен те йӑвӑртарах шукӑшсем йӑтса пырат̌.

Ентӗркенӗ куҫӗсем ҫӗрелле пахса пынӑ пирки, Ентип урамра ҫӳрекен лаша ҫине пырса тӑрӑннӑ (лаши хӑйӗннех пулнӑ). Лаша тутипе Ентип сӑмси тӗлне-тӗлех пулаҫҫӗ. Ентип карт! сикет.

— Христос воскрес!—тет лашана (ҫын тесе).

Анҙах лаши турра ӗненменни пулнӑ: „Христос воскрес" тенине хирӗҫ „Унисӑм воскрес" тесе ҫӑварне уҫма шухӑшламарӗ, шӑмарса ҫеҫ илҙӗ.

Килне ҫитес умӗн ватӑ карҙӑк Униҫҫе тӗл пулҙӗ пирӗн мӑнкун ӑҫтине шыраса ҫӳрекене. Ҙӑмпӑлт! турӗҫ иккӗшӗн тутисем. 70 ҫулхи Униҫҫе карҙӑк тути хӗр тутинҙен те тутлӑрах туйӑнҙӗ Ентипе. Хавасланнипе:

— Пӗр виҫӗ курка ӗҫме айта ман пата!—терӗ карҙӑка.

Карҙӑкӗ итлерӗ. Унӑн та ҙунӗ тулӑхнӑ ниҫта мӑнкун ҫуккине кура.

Пӳрте илсе кӗрсен, карҙӑка хӗрлӗ ҫӑмарта тыттарат̌, сӑра парат̌. Ӗҫеҫҫӗ. Авалхисене асӑнаҫҫӗ. Савӑнаҫҫӗ. Сӗтел ҫине ҫӗнӗрен тухса ларнӑ сӑра витрипе ерех путылки те савӑнаҫҫӗ,—ытлашши савӑннипе пушансах пыраҫҫӗ.

* * *

Карҙӑк такҫанах пӳртрен ҫухалнӑ, Ентип пӗҙҙенех ларат̌. Куркине тултарат̌ те:

— Шаклатса *) ӗҫери, хуҙӑм; тепрер курка,—тесе куркине тытса ерех кӗленҙине шаклаттарат̌.

— Ех, хуҙӑм!—тет сӑра витрине.—Ӗмӗр пӗрле пурӑнӑпӑр.

Сӑра витри хирӗҫ ҙӗнмест.

Йулашкинҙен: „12 сурӑх хӳринҙен 12 шӑртан турӑмӑр" тесе йурланӑ вӑхӑтра, арӑмӗ пырса кӗрет (вӑл ҫӗвӗҫ маҫтерскойӗнҙе ӗҫленӗ пайан).

— А-ӑ, услап! Намӑссӑр! Йытӑ пиҙӗ! Ӑсу ӑҫта сан?

— Кӑмака хыҫӗнҙе.., кӑмака хыҫӗнҙе унта ҫурштав ерех ларатҙӗ.

— Ҫынсем ӑмӑртуллӑ ӗҫлерӗҫ. Пуршуйсем пирӗн ҫине килсен хирӗҫ тӑмаллисем хатӗрлеме пулӑшасшӑн ӗҫлерӗҫ. Вӑл—ӗҫсе ларат̌...

Ентипӑн 10 ҫул ӗлӗкрех 20 тенкӗ парса илнӗ арӑмӗ вӑрҫнине итлеме, кӑмӑл пулман. Ҫавӑнпа тулалла тухса карӗ вӑл тайкаланса.

* * *

Вӑш-вӑш-вӑш ҫил вӗрет. Йӑваҫ тӗррисем выҙамалла ҫапкалана-ҫапкалана илеҫҫӗ. Йӑваҫ тӑррисенҙен те ытларах ҫапкаланса, Ентип пырат̌ урампа. Телефон йупи тӗлне ҫитсен:

— Ҫул пар!—терӗ хайаррӑн кӑшкӑрса йарса. Телефон йупи ку етемпе ҫыхланиҙҙен ҫыхланманни терӗ пулмалла—нимӗн те ҙӗнмерӗ.

— А—а, есӗ кулма! Йалта пӗҙҙен мӑнкун турӗ, тетӗни! Мӗн ӗҫ санӑн епӗ мӑнкун тунипе!—халсӑрланнӑ хулне тунката ҫинелле сулса йаҙӗ.

Ҫавӑнтах ҫӳлтен пӑрахнӑ кӗрӗк пек леплеттерсе анҙӗ ҫӗре. Сӑмси ыратрӗ. Сӑмси ҫине ҫилленнипе тути мӑкӑртатма пуҫларӗ—шуйтансене асӑнат̌. Тем ҙул асӑнсан та, шуйтансем пырса пулӑшас темерӗҫ, мӗншӗн тесен вӗсем ӗлӗкхи пекех ҫук пулнӑ тӗнҙере.

Ӗшеннӗ йал ыйха кайма хатӗрленет. Ентип тунката кутӗнҙе харлаттаракан кӗвӗ каласа выртат̌. Никам та ӑна пырса тӑратмаст̌. Пӗр ыҫӑпа аптӑранӑ йытӑ ҫеҫ, шӑршӑпа пынӑскер, Ентипӑн ҫавартан тухнӑ сӑрасемпе ҫимеллисене сӗлехисене йухтарсах ҫуласа тӑрат̌ вӑрӑм ҙӗлхипе. Сухалӗ ҫумне ҫыпӑҫнӑ хӑсӑкне ҫуланӑ ҙухне, Ентип ыйхӑ айӗн;

— Христос вокрес!—терӗ йытта.

---

Тепӗр кунне шутласа пӑхсан, ҫав кун колхоҫнӗксем сыхлӑх ӗҫӗ ваҙҙи 524 тенкӗ туса пани палӑрҙӗ.

**Йӑван Муҙи.**

*) Шаклаттарса, тав туса.

# Сӗнтӗрвӑрри пушар трушини

Сӗнтӗрвӑрринҙи пушар трушинин лашисем иаҙар, вӑйсӑр. Майӑн 23-шӗнҙе тревокӑна тухсан пӗр лаши кайса ӳкрӗ. Вара кайса ӳкнӗ лашана тӑратса кайалла илсе карӗҫ.




**Трушиннӗк:**—Тӑр-тӑр лашам, тӑр лашам! Тӑрсассӑн киле илсе кайӑп та пӗр кӗренкке утӑ парӑп, икӗ витре шыв парӑп.

# Сăрă



Пăхсассăн, ытти хуртсенҫен пысăк уйрăмĕ çук пек унăн, апла çеç мар, ыттисенҫен йăвашрах пек туйăнаť. Питех пырса çыпçăнмасť çын çумне. унăн хăйĕн „ĕçĕ", хăйĕн шухăшĕ, хăйĕн пурăнăçĕ малта.

— **Çиме пыл пур**, ытти хытти çăва патне.

Вĕлле хурҫĕсем ĕçлеççĕ уншăн. Çавăнпа, **авантарах** пăхсассăн, унăн уйрăмĕ палăраť. Ыттисенҫен самăр вăл, мăнтăр, тутă.

**Уҫҫот** тума отҫот тума та питех йуратмасť вара çав **сăрхурт**, мĕншĕн тесен мĕнҫул çини паллă пулаť апла тусан.

— Мĕне кирлĕ отҫот тума,—тет вăл çунатне саркаласа,—мана нумай кирлĕи мĕн.

Арапусĕнҫи Вăрмар районĕ пахҫа-çимĕç шкулĕн, йе тўррипе каласан, çав шкул пуçлăхин **Порфирийĕв Ентрин** вăрманта утар пур. Паллах ăна, вăл шкул утарĕ тет, шкул йаҫĕпе тытса тăраť, шкул вăйĕпе, вĕренекен аҫасене ĕçлеттерет, ăна илсе парăп, кăна илсе парăп тесе илĕртет вăл вĕсене—„вĕлле хурҫĕсене," хăшне хăратса ĕçлеттерет. Вĕсем çăвĕпе ĕçлесе, сыхласа пурăннă унта. Хăш ҫухне уçăлмалла Порфирийĕв Ентри хăй те кайкаласа килнĕ.

— Утара кайса килесха.

Кĕркунне пыл пухнă ҫухне вара ăна никам та кирлĕ пулман. 24 вĕллерен пуçтарса килет вăл пыл.

— Çи, матка пыл, савăн.

„Ул-ку пуласран" формăшăн актă çырмалла. Вăл питех шухăшласа тăмасť. Хăйне пулăшакан вĕренекенне пĕр вĕлле параť те, ăна йăпатса алă пустараť.—Паллах вĕренекенĕн итлес пулаť. Пуçлăх вăл çиленсен шкултан та кăларса йама пултараť.—„Мĕн пурĕ 6 пăт пыл тухрĕ"—тесе çырнă пулнă актине.

Кашни вĕллерен 2 пăт пыл шутласан та 50 (аллă) пăта йахăн пыл пулмалла. (Кăçал вĕллесенҫен 2 пăтран кайа тухман, 4-шар пăт тухнисем те пулнă). Ăçта хунă вăл пыла? Никам та калама пултараймасť. Уҫҫот та отҫот та туман.

— Отҫот туса пархa, Порфирийĕв йул.—тесен—çунатне çеç сулаť вăл.—Мĕн унпа аппаланмалла!

Халҫен унпа „аппаланмаллах" пулнă. анҫах пĕлтĕрхи уҫитлĕсем урăх района куçнă (Порфирийĕвпа пурăнма „тамăк"). Çĕннисем ăна халҫҫен пĕлмен, нумай пулмасť çеç сиснĕ, вĕренекенсем калама хăраççĕ.—„Çтиппентирен кăлараť".

—Патшалăха мĕнҫул та пулин пыл панă-ши çак Порфирийĕв йулташ,—ыйтаççĕ аҫасем пĕрпĕринҫен.—Кам пĕлет, мур пĕлети? Пани мĕнĕ курăнмасť,—теççĕ теприсем,—Авă аҫи сывмар пулсан Шаппирă тухтăра 9 кило панă, тет, кĕркунне лишшентсăсемпе çăмартапа пыл улăштарнă тет, ăна пĕлетпĕр, ыттине ăçта ҫикнине пĕлместпĕр,—теççĕ. Уҫҫотпа отҫот пулмасан ăçтан пĕлетĕн? Каккуй унта, хуртсем валҫи тесе çулла пĕр михĕ пессок илнĕ, ăна та таçта хунă.

— Мĕнле апла вăл, аҫсемĕр?—тĕлĕнеççĕ çынсем.

— Ҫорт пĕлети мĕнлине.

Унтан пуçне вĕлле хурҫĕсене хĕлле çитерме тесе 22 рам караслă пыл хăвараť, вăл пыла **мĕнле хуртсем,** хăçан çисе йани паллă мар, мĕншĕн тесен, ревиçи комиçси пуçлăхне вăл хăйĕн самеçтиттĕлне М. Тимитрийĕва „суйланă," лешĕ кĕркуннеренпе те пĕр ревиçи туман. Ҫылайĕшĕ, шкул пуçланнăранпа та ревиçи пулман, теççĕ.

Шкул пуçлăхĕ Порфирийĕв Ентри, хăй хуçа, «йетинонаҫҫали», праť! Çапла ăнланнă вăл ăна.

Сăр хурта вĕлле хурҫĕсем çилли туса çитсен кăларса ывтаканҫĕ, ку тăратха. Нумайҫҫени? Паллă мар. Малашне вăл патшалăха мĕнле «усă» кўме шутлани те паллă марха, тошĕ. Халиҫҫенхи ĕçĕсене кĕскен шутласа тухăр, истори валҫи кирлĕ пулĕ.

Кĕркунне вĕренекенсене валеçсе пама пуç тутрисем, сăмса тутрисем килнĕ. Пурте Порфирийĕв аллине çакланнă, конешнă. Халиҫен никам та мĕн ҫул тутăр пулнине, кама панине пĕлмест. Матки сыхса çўренине куркаланă çынсем, çавă çеç. Матки тенĕрен, сăмах майĕ çакна та, истори валҫи, астутарса хăвармалла. Ăна вăл пĕлтĕр столовăйа «вырнаçтараť», уншăн ыттисем ĕçлеççĕ, вăл шалу илет.

Флак тума тата лосăнкăсем çырса çакма шкула 10 метр хĕрлĕ маттери параççĕ, ку икĕ меттăртан флак тăваť, сакăр меттăрне «çĕр çăтнă». Ҫутă, тейĕр есĕр, ҫутă çав, халҫхи вăхатра та ун пек «хăватсем» пулаççĕ мĕн?

Пахҫа-çимĕçне сийен тăвакан хуртсене пĕтерме симĕç супăҥ панă, темиçе кĕрепен кке (паллă мар), халҫĕ вăл унпала.. ҫурт пĕлети мĕн тунă унпала. Истори ун çинҫен нимĕн те шарламасť.

Тата аҫасен столовăй валҫи кĕпе çăвакан супăҥ панă тимиçе кĕрепенкке. Вăл та паллă мар—ăçта çĕтнĕ супăҥ?—никам та пĕлмест. Столовăйран пĕр михĕ канăхвит çĕтнĕ, вунă пăт ыраш çĕтнĕ. Столовăй ун патĕнҫе, çĕраççисем ун аллинҫе, протуктăсем пур те ун аллинҫе. Пĕлтĕр те, кăçал та аҫасен протуктисемпе усă курса пурăннă (паранкă, купăста, помитор, тата ыт. те). Нўхреп алă айĕнҫех. Пĕр сăмахпа каласан, укçа кутăн кĕрет. Çавăнпа вăл ытти уҫитлĕсене мăшкăласа кулаť.

— Пурăнма пĕлместĕр есĕр, пăхăр акă, епĕ йепле пурăнатăп, манăн пурте пур,—тет вăл.

Кăçал уҫитлĕсене салатма тĕрлĕ тумтир килнĕ. Порфирийĕв хăйне атă илет, прўкки илет, сукконнăй кимнаçťоркă илет, маткине палҫто илет, пĕр аҫишĕн 3 коçťум илет, мĕн пурĕ те шкулĕпе 3 çех пулнă, тата темĕскер те пĕр илет, мĕншĕн тесен вăл тĕнҫере пурăнма пĕлет.

Пĕлтĕр колхос çамрăкĕсен kaçхи шкулне веҫ-ҫĕр тума шурă çăнăх параççĕ, пĕçерсен аҫасене пĕрер ҫĕлĕ тивет, ăна 5 каравай тивет. Мĕншĕн тесен сăр хурт тутлă апат йуратать. Тепĕр йенҫен тата вăл „тĕнҫере пурăнма“ пĕлет.

Шкулта стурăш пур—Куçнетсов, ăна вăл хăйшĕн вутă та çуртарать, тата ытти ĕçе те тутарать, мĕншĕн тесен вăл çын вăйĕпе пурăнма йуратать.

Унăн патĕнҫе 14 çулхи ҫухăн хĕр ĕçлесе пурăнать, кĕпе çăвать, урай çăвать, килти ытти ĕççене туса тăрать. Ăна вăл страхховать туман, токăвăр туман, укçа тӳлени тӳлеменни паллă мар.

Вĕренекенсем унăн тата ытти „ĕçĕсем“ çинҫен те пĕлеççĕ, анҫах ыттисене ирсĕрлĕхпе кĕрешекен оркăнсем тупĕç. Пĕр сăмахпа каласан, «ăшă çĕре» кĕрсе ӳкнĕ Порфирийĕв Ентри. Пуйан çын ывăлĕ (ашшĕ офитсер пулнă имĕш) кулак итеолокийĕ пуçран кайман çав, ҫасах тасалас çук курнать.

Ҫиркӳ праçнĕкĕсенҫе (раштавра, çăварнире те) пыллă сăра туса ратнисемпе ĕçет, пыл нумай, пуйанлăх пур, йеппе ĕçкĕ туса савăнас мар.

Çавăнпа пулас вăл, хĕлле ăна Вăрмар стантсине ĕçлеме каймалла тусан, унăн сехри хăпрĕ, темĕнле сăлтавсем тупса йулҫĕ-йулҫех Арапуçне, мĕншĕн тесен вăл кунта «хăй хуçа», никам та унтан отҫот ыйтмасть, никама вăл отҫот памасть.

— Отҫотпа аппаланма йерçмест.

Ну, йерçмесен ан йерçтĕр, унăн ирĕкĕ, анҫах малашне капла пулма пултараймасть. Совет влаçĕ ун пек йĕркесĕрлĕхсемпе кĕрешме хушать, сăр хуртсене иртĕнме памасть.

Çапла вăл хăйĕн уйрăм хуçалăхне вăйлатас шухăшпа, тата ытларах пуйас шухăшпа, шкул ĕçне йĕркелесси çинҫен мансах кайнă, шкулта вĕрентме кĕнекесем çук, хут, кăранташ, кăпинетсем çук, кирек те мĕнле вĕрент. Çавăнпа пулас, вĕренекенсенҫен 50% ытла вĕренме пăрахнă, III-мĕш курăсра 36 çынтан 14 çын çеç йулнă. Уҫитлĕсем те кашни çулах улшăнса тăраççĕ. Хăй вăл, как калас, «шиккарнă» пурнать, велоççипет илнĕ, фоттоопесаттĕлствă туйаннă, тумланнă, праçнĕкре шкул лашине кӳлет те, маткине лартать те, ҫуптарать Ҫакка (унта тăванĕсем унăн) йе Туçана (хăй йалĕ). Вăхăтран вăхăта хăнасем пухса ĕçкĕ тăвать.

— Ух, ты, пурăнăç мар, малинă!—Урăхла каласан... мĕнле калас? **Сăрхурт, сăтăрçă.**

**Ç. Иалавин. И. Турат.**

# Еппиттафи*)

Паришре Шветси шăрпăк çинтиккаҫĕн хуçи Крайкер перĕнсе вилнĕ.

Хаçатсенҫен.

Тен хӳхĕм урнăна кĕрет-тĕр,
тен хурткăпшанкăсем активĕç,—
ăçта пулсан та
Ивар Крейкĕр
ман еппиттафийĕме тивĕç.

* * *

Кунта выртать
шăрпăк королĕ,
ҫунне ăсатрĕ
ҫăн çĕре.
Ытти короҫ пекех
ун ролĕ
пĕтсе çитсеҫҫĕ тĕнҫере.

Кăмăлĕпе
хăравçă çынҫҫĕ,
пит йуратмасҫҫĕ
криçĕсе.
Çампа
ун пурнăçĕ
сӳнҫĕ
йĕпе шăрпăк пек сĕврĕлсе.

Иртен-сӳрен!
Пус тарлă çамкуна
шур тутăр,
пус та кала:
«контсерни, треси—
йăвăр тăпри...
сулмаклă пултăр!»

**П. Хусанкай.**

*) Еппиттафи—вилтăпри çинҫи ҫулпалăксем (памĕтник) çине асăнмаллăх çырни.

# Кĕске йумах

Канаш хула копператтивĕ тытакан столовăйра тасалăх çук. (Йалкор çырăвĕ).




— Кĕске йумах йарса парам. Туппине тупайрăни?
— Ну!
— Пĕр пĕркенҫĕк айĕнҫе 4 хĕр хӳхлĕ (йĕрĕ), пĕркенҫĕкĕ çинҫе вараланҫăк пиртăла сарăлса выртĕ. Çав мĕн пулать?
— Пирĕн столовăйри сĕгел çитти.

# Ответсăрлăх

Ђăваш автономийĕ 12 çул тултарнă çĕре Ђăваш респуплĕкĕн талкăшпе хут пĕлекен респуплĕк пулмалла.

Нимрен ытла, çитĕннисене вĕрентес ĕçе асăрхаса, у ĕçе йусаса йарассишĕн йалĕçтăвкомĕсен вирлĕн çлени кирлĕ. Çапла, вĕт, йулташсем!

Кăçал Çĕрпў районĕнђе 3676 хут пĕлмен çынна 6965 сахал хут пĕлекен çынна вĕрентмелле пулнă, анђах апрелĕн 27-мĕшне 1052 хут пĕлмен çынна, 840 сахал хут пĕлекен çынна çех вĕрентнĕ. Çапла вара хут пĕлменнисене вĕрентес плана 30 прођђăна йахăн, сахал хут пĕлекеннисене вĕрентессине 12 прођђăн çех пурнăçланă. Сахал вĕт йулташсем!

Малалла Пысăк-Ђăрăш йалĕ çинђен каласа парăпăр.

Унта Йаккăвлĕв ликвитаттăр октăпĕрĕн 1-мĕшĕнђен пуçласа йанварĕн 1-мĕшне çитиђђен вĕрентсе 12 хут пĕлмен çынна вĕрентсе кăларђĕ. Ун çинђен Йаккăвлĕва йалсовеђĕ те çапла ĕнентерў çырса панă:

Удостоверение.

Дано сие удостоверение ликвидатору Степно-Тугаевского с/сов. Цивильского района ЧАССР Яковлеву Тимофею Я. в том, что тов. Яковлев действительно в 1931 г. 1-го Октября по 1-ое Января ликвидировал девятнадцать (12) чел. неграмотных и перевили их в школу м/гр. тридцать пять (35) человек.

Настоящее выдано для представление в Цивильского РИКа.

Председсельсовета П. Григорьев.

Вăт ĕнтĕ вула та ăнлан: „вунтăхăр çынна вĕрентсе кăларђĕ" тасе сăмахпа çыраť, унтах тата 12 хут пĕлмен çынна вĕрентсе кăларђĕ, тесе ђихвăрпа çырнă. Унтăн 12 çынтан 35 çынне сахал пĕлекенсен шкулне куçарнă, тесе ĕнентерет йалсовеђĕ. Ах, ку çитĕннисене вĕрентес ĕçпе пуç çавăрăнсах кайаť. Аптранипе ликвитаттăр ĕç укçи илме райĕçтăвкома кайаť.

Çитрĕ Йаккăвлĕв Çерпў райĕçтăвкомне, кăларса хуђĕ ĕнентерўве çут пайĕн пуçлăхĕ умне.

— Есĕ ку хутпа мĕн тăвасшăн?

— Мĕн тăвасси, манăн ĕç укçи илмелле те.

— Сирĕн ĕç укçине йалсоветĕнђех илмелле вĕт, кунта килсе çўремелле те мар!

— Епĕ йалсоветĕнђе ыйтнă-ха, вăл мана йанварĕн 6-мĕшĕнђе çак ĕнентерўве çырса парса, ĕç укçи илме кунта йаđĕ çав.

— Апла пулсассăн райĕçтăвком претçетаттĕлĕ Кçенофонттăв йулташ патне кайса пăх-ха.

— Кайса йумахламха, мĕн калĕ!?

Йаккăвлĕв Çут пайĕнђен тухса, кĕрсе кайрĕ претçетаттĕл капинетне.

— Йулташ Кçенофонттăв! Епĕ кăçал çитĕннисене вĕрентес ĕçпе ĕçлерĕм, укçа парăрха?

— Сирĕн вăл укçана йалсоветĕнђе илмелле, кунта мар.

Аптранипе Иаккăвлĕв каллах ĕнентерўве Кçенофонттăв умне кăларса хураť. Претçетаттĕл ку хута тытса хĕрлĕ ђернилпа:

„С/с. из средств самообложения выдать по 4 руб. 50 к. за каждого обученного. 9 февр. КС—".

тесе хĕреслĕ çырса парса йараť. Çитет Йаккăвлĕв йалсоветне—çаплах укçа çук... Аптăранипе февралĕн 24-мĕшĕнђе Йаккăвлĕв Çĕрпўве каллех ыйту çырса параť.

Çитрĕ ку хутпа Йаккăвлĕв йулташ укçа-тенкĕ пайне.

— Манăн укçа илесђĕ те?

— Мĕн укçи тата?

— Çитĕннисене вĕрентнĕшĕн.

— Уншăн йалсовеђĕн тўлемелле вĕт.

— Памасť, вăл кунта йараť çав.

Хута илсе финанс пайĕн пуçлăхĕ Моисейĕв йулташ вуласа пăхрĕ те: „Ст.--Туг. с. сов. обеспечить из местных средств за счет сметы 32 г. 23 февр. Моисеев",—тесе хĕрлĕ ђернилпа хĕресле çырса парса йаđĕ.

Йаккăвлĕв ликвитаттăр тухса кайрĕ йалсоветне. Çитрĕ те йалсоветне кăтартрĕ. Ťху каллех укçа, терĕç йалсоветĕнђисем. Хута илђĕç те: „Çĕрпў Рикĕњ рай фоне. Пысăк-Ђăрăш й. к. 1932 ç. бюджет сметине рик удвердить туман, тата пысăк ђăрăш йал. кан. г—б счете—те уçман культ—сбор пуçтарнине ку таранђђен Рик—бюджетне хывса пынă çвăнпа пысăк—ђăрăш йал—канаш пĕљт çинђен илсе план туса укçа пама пултараймаç" 24 февр. 1932 ç. й—к пуç. çырусь (алă пус.)

Çыруçăн алă пуснине вулама хĕн, сысна хўри пек кукăрткаласа хунă.

Çапла вара Йаккăвлĕв темиçе хут кутăн пуçăн ђупса та укçа илеймерĕ. Йулашкинђен ликвитаттăрăн ĕнентерўвĕпе сайавленийĕ ресољутсипех тулса ларђĕç, анђах укçа илеймерĕ. Нимрен ытла ку хутсене Пысăк-Ђăрăш йалсовеђĕн февралĕн 24-мĕшĕнђи ресољутсийĕ тултарђĕ.

Çапла вĕрентрĕ кăçал Ђăрăш йалсовеђĕ, хăйĕн йалсоветĕнђи хутпĕлменнисене. Ђăрăш йалсовеђĕ куљтфронтран пăрăннă, пайан ăна капкăн çаварлăхне хыптарсах куљтфронт йенелле çавăрар.

**Тивĕш Çынни.**






# 4-мĕш прикатăри прикатир

— Иван Иванђ! санăн пайан акана каймалла.

— Ей, Лексей, ђасрах аңђуна кĕрсе ђĕн, ĕçкĕ хатĕрлетĕр.—терĕ Тăвай йалĕн (Канаш р.) „Хавас“ колхосăн 4-мĕш прикатирĕ Иван Иванђ хăйĕн ывăлĕ Лексейне, колхос пуçлăхĕ акана каймаллине пырса каласан.

I.

Иван Иванђ арăмĕ—Варвари пĕр самантрах ĕçкĕ тата çимелли сĕтел çине кĕртсе лартса вырнаçтарђĕ.

— Ваңкки кум, пирĕн 4-мĕш прикатă мĕн-ма пайан ку таранђђен те хире тухмасť?—пырса ыйтрĕ прикатă ђленĕ. Апла каласан Иван Иваађ, йе урăхла (йалти çынсем ăна Ваңкки кум тесе ђĕнеççĕ)—Ваңкки кум тӳрех карташĕнђе ларакан çулçăпа хађ çеç йешĕлленнĕ йывăç туратне пырса перĕнсе сулахай урине ыраттарђĕ.

— Варвари! Варук!—тесе кăшкăраť хăйĕн мункун ĕçкипе кӳпсе кайнă пырĕ.

Вăл вăхăтра, хăш-пĕр прикатă ђленĕсем хастарланса Иван Иванђ килĕ умне лашасемпе пырапыра тăнă. Мăнкун кунĕ тата ытларах пољшевикла 3-мĕш çуракине, сарлака та анлă „Хавас“ колхос хирне илсе тухас,—теççĕ.

— Лексей ывăлăм, мана кĕтсе тăракан çынсене кала, кĕђђĕр пурте ман пата, лашисене хапха умне кăкарса хăварђђăр!..

Ывăлĕ пропккă пек, пĕр самантрах прикатир—ашшĕ приккасне калама ђупаť.

Анђах колхос ђленĕсем прикатир—Ваңкки кума йатлаçа-йатлаçа, ун патне ĕçке кĕрес вырăнне сарлака та нӳрлĕ хир йенелле хаваслă плук, çейĕлккă сассисемпе ђĕтретсе уттарђĕç.

* * *

Иван Иванђ прикатă ђленĕсене кĕтсе лараť. Анђах ларсан-ларсан ун патне пĕр ђĕр-ђун та кĕменнине кура арăмĕ хатĕрлесе лартнă ĕçкĕапата сĕтел çинђен сăтăрса тăкаť. Хĕрелсе кӳпсе кайнă алли урипе тапкаланаť.

— Верук!—Вер-у-ук! Ăçта есĕ. Кĕр пӳрте, ăçта тартрăр есир манăн прикатă ђленĕсене-е?!

Арăмĕ пӳрте кĕрсен Ваңккин кӳптĕркке алă ђăмари аça çапнă пек Верук пуçĕ çинђе çатлатса ташлама пуçларĕ.

---

Çак вăхăтра пур ытти колхоçнĕксем хаваспа ăмăртса колхосăн нӳрлĕ уй-хирне хурата-хурата хăвараççĕ.

Ав, вăрман, йепле хитре ун сăнĕ. Тата йешĕл тĕспе пĕркеннĕ уй-хир!.. камăн çак самантра хире тухса ĕçе кӳлĕнсе тарлиђђен ĕçлес килмĕ. Канаш МТС-ђен çиђĕ трактăр пĕр вĕçхĕррисĕр хире, хурçăпа ерешленĕ пек, колоннăн шăваť. Шăваť çеç мар, ăмăрту утарлăх йĕркисем йарăнаççĕ кунта.

Çапла Тăвайĕнђи колхос хăйĕн ĕç планне срукђђен тултарђĕ. План тăрăх тăхăр кун акмаллађђĕ. Вăл çиђĕ кунта йарăмлатса вĕçлерĕ ĕçĕн пољшевикла акан аслă планне.

Иван Иванђ прикати плана кайарах тултарђĕ. Майăн 4-мĕш кунне мăнкун ĕçки пирки прикатир хире тухаймарĕ. Мĕншĕн тесен унăн арăм Варвари пуçне аça çиçĕм пек кӳслеттермелле пулнă.

II.

Анаçтаççи Моиçейĕвнă уђђителнитсăна 1-мĕш май уйавĕ кунне колхос тырри ампарĕ çари патне сыхлама ђассовойа тăратнă. Ирхине 8 сехетрен пуçласа 9 сехетђен пĕр сикмесĕр тăђĕ Анаçтаççи

— Анаçтаççи Моиçейĕвнă, пирен шкул ађисем шкула пуçтарăнђĕç, темонстратсипе миттĕнка каймалла, айта унта никам та йĕркелесе тухакан çук,—тесе хашкаса пырса каларĕ пĕр пионер.

— Анаçтаççи, есир уйав кунне мĕн-ма кунта тăратăр?

— 4-мĕш прикатă пуçлăхĕ Иван Иванђ тăратрĕ,—тесе ответлерĕ Анаçтаççи.

* * *

Прикатир Иван Иванђ (Ваңкки кум) ӳсĕр пуçĕпе çĕркаç сĕтеле шакка-шакка:

— Есĕ, Анаçтаççи, ыран ђассовойа тăратăн!—

— Иван Иванђ, манăн ађасемпе 1-мĕш май уйавне миттĕнка тухмалла!..

— Çук, çук. Ниђево тăратăн, атто колхосран кăларатпăр!—тесе кăшкăрнă Анаçтаççи умĕнђе.

---

Халĕ çураки туса пĕтернĕ хыççăн Ваңкки кум пуçĕ кăшт урăлнă пек пулђĕ.

Пĕр ирхине вăл хăйне хăй тарăхса вăрăм çӳçĕнђен çавăрсă тытса ђўт-ђўт кукшаланса йулмарĕ.

Тепĕр ирхине вара Иван Иванђ тем пулнă пирки килне таврăнсан шаккал пек, шăлне кă-ђăрркăђăрт!—кăђăртаттарса ларнă. Арăмĕ мĕн каланине те илтмен. Мухмăрлă хĕрелсе кӳпсе кайнă куçĕсемпе çĕрелле пăхса ларнă.

Ăна вăл кун колхос правленин ларăвĕ „Йуçĕ шерпет“ ĕçтернĕ пулнă мĕн. Вăл шерпете ĕçнĕ хыççăн Ваңкки кум пуçĕ аранах мухмăртан уçăлнă.

А. Атăлçă.

# Тӗлӗк мар

ХУТАР

## (Фелйеттон-калав)

„...Халиҫҫен рапоҫҫисен снапшени хаҫхинҫен питех йапăх пулнă, çавăнпа та вара хаҫхи снапшенипех килӗшсе пурăнма йурат тенипех, ун çине тайăнса пурăнма йурамаст...“
„Ӗлӗкхине мар шута илмелле, рапоҫҫисен пайанхи ыйтăвне шута илес пулат.“

И. Сталин.

* * *

Кăтра çӳçлӗ сарă хӗвел йулашки ылттăн тӗслӗ пайракисене тӗнҫе çине карҫӗ те тасти айакри сӗм хура вăрмансем хысне кӗрсе пытанҫӗ. Вăрман тӗлӗнҫи çӗтсе кайнă пӗлӗт таткисем темрен вăтанса хӗрелсе йулҫӗç. Тӗнҫе тăпланҫӗ. Пăла шывӗ*) çеç çуркунне пулнăшăн хӗпӗртесе ахăрат, тепӗр кунҫе кӗпере çӗмӗрсе кайасси çинҫен шутлат. Йал пусӗнҫе купăс сасси илтӗнет, хушран Йелҫӗк хӗрӗсем йурă шăрантараççӗ.

Хӗвел анса ларнă ҫух
Мӗлкем кайат айакка;
Пирӗн мӗлке кунта та,
Анҫах шухăш кунта мар.
Алла сулласа йарап,
Тутăр вӗçтерсе йарап;
Пит курассу килсессӗн—
Портрет çаптарса йарап...

Сассем йалтан уйаллах тухса кайаççӗ, тухса кайаççӗ те таçта çитсе çухалаççӗ. Хушăран тата вӗсем Мишукпа Пашук хăлхисене пырса кӗреççӗ. Мишукпа Пашук иккӗшӗ те Шупашкартан килнӗ. Прикатирсем. Пӗрри—типокрафинҫе ӗçлекен рапоҫҫи, тепри—„Канаш“ хаçат çине çырса тăракан феҫйеттонис.

Мишукпа Пашук иккӗшӗ те шӳт тума йуратакан çамрăксем, вӗсем ыттисене те, çамрăккисене те, арçынне те, хӗрарăмне те култарма пултараççӗ. Пайан вӗсем выçă, Канаш стантсинҫен анҫах çитнӗ те Кӗçӗн-Йелҫӗк урамӗсем тăрăх столовăй шыраса çӳреççӗ. Йурласа ларакан хӗрсем патне çитсен, вӗсем ыйтрӗç:

— Кунта столовăй пекки пури?—тесе.

— Пулмасăр.. Пур.. Йелҫӗкре те пулмасан, ăçта пултăр ами,—терӗç хӗрӗсем йашкӗрӗмсенҫен кулса.

Вара пӗр çӳлӗ пӳрт çине темиçен тӗллесе кăтартнă хыççăн, Мишукпа Пашук столовăй йенелле апатланас ӗмӗтпе утрӗç.

* * *

Столовăйӗнҫе халăх туллийех. Виçӗ сӗтел, виçсӗшин хушшинҫе те халăх лăк.

— Кунта апат çитереççӗ-и?

— Çитермесӗр... Çитереççӗ...

— Мӗн?

— Купăста çине шыв йарса, шыв çине купăста йарса пӗсернӗ йашка... Кашни кунах çавă... Урăххине ан кӗт..

— Е-е! ес, шăллăм, мăнтăрланнă... Лайăх купăстара ним те çук... Лайăх купăстаран лайăх йашках пулат...

— Йашки лайăх мар çав... Хырăм выçă... Çапах та вăл йашкаран таçталлах тарас килет... Ҫашкисем таса мар, йытă йатса каймалла... Кашăккисем те çавах... Столовăйне илем килтӗр тесе ҫеҫексем те лартнă, анҫах наҫар пӗсернӗ апат çав çавах... Улшăнмаст.. таса мар апатпа ҫирлеме те пулат... хăрамалла...

— Тата столовăйӗнҫе мӗн пур?

— Тата Карамаликкăв пур,—терӗ пӗр лутра çамрăк, хăй кассă йеннелле пăхса кулҫӗ.

— Вăл мӗнле апат?..

— „Капкăн“ ваҫҫи пӗсернӗ катлет пулӗ,—тесе хуҫӗ Мишук.

Çынсем кулма тытăнҫӗç.

— Ха-ха-ха!..

— Ах-ах-ах!..

Хăшсем пăшăлтатса илҫӗç.

— Вӗсем типокрафивҫен килнӗскерсем, тет... Карамаликкăва каллех хаçат çине кăлараççӗ ӗнтӗ...

* * *

Апатланкаланă хыççăн Мишукпа Пашук райкомола çывăрма кайрӗç. Урамра тӗттӗм. Куçа йӗппе пырса ҫиксен те курăнмаст. Çил таçти хура пӗлӗтсене пухса Кӗçӗн-Йелҫӗк çинелле хăвалат. Сассем çук. Хӗрсем кӗнӗ. Хыçал касра йулашки каҫҫă хăйӗн купăсне пӗр-иккӗ тăсрӗ те вăл та килне кӗрсе кайрӗ. Мишукпа Пашук çеç урамра калаçса пыраççӗ.

— Мишук, есӗ кӗçӗр мӗн ӗçлес тетӗн?

— Феҫйеттон çырма шутăм пур, Пашук.

— Ҫăнах та çырха пӗрре вар хытаҫҫен куллăх...

— Сан тата вару шӗвелсе кайри мӗн?

— Шӗвелӗ ку апатпа... Ытти тата, ҫирлес марҫҫӗ... çапла калаçнă хыççăн Мишукпа Пашук пӗр-пӗринҫен уйăрăлса кайрӗç. Мишук райкомола кӗҫӗ, Пашук—хăйӗн тусӗ патне кайрӗ.

Урамра шăпах. Тӗттӗм. Унта-кунта ҫӳреҫесенҫен лампă çутисем урамсем варне ӳксе кăшт çутă параççӗ. Хушăран тӳпери пӗлӗт татăккисем виттӗр çурла йеверлӗ уйăх пăхса кулат, çăлтăрсем тата çурхи пӳтексем пек пӗр-пӗринпе выҫҫаса илеççӗ.

* * *

Карамаликкăв та столовăйран килне таврăнҫӗ. Столовăйне хупрӗç. Пӳртсенҫе хăйă çутисем хуллен хуллен сӳнсе пӗтрӗç. Йал йăхăра. Мишук та йăхăра, вăл харлаттарса çыврат.

— Çывăрас пулӗ, феҫйеттонне ыран та çырăп, —терӗ вăл çывăрма выртас умӗн —Ир каçран ăслăрах... Мӗн çинҫен çырасха?. Кӗçен-Йелҫӗкре тислӗке çырмана кăларса тăкни çинҫен? Та, ку—аван темă... Кун çинҫен çырмаллах... Парттин XVII-мӗш конферентсийӗ те тырпул тухăçлăхне хăпартасси çинҫен каланă... Тырпул тухăçлăхне хăпартас çӗрте тислӗк те калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрат... Çавăнпа та, тислӗке Пăлана мар—уйа памалла, тислӗке уйа кăлармалла!..

Тислӗк çинҫен шутласа выртнă çӗртех Мишук çывăрса кайрӗ. Тепри пулсан, Мишук тӗлӗкре хуп татки сӗтерет, темелле.

— Хăр-р-р!.. Хăр-хăр-р-р!..

Йӗри тавра йумахри пек тăплăх. Вăхăт вăрах-

*) Кӗçӗн-Йелҫӗк патӗнҫе йухса кайакан шыв.

хăн шăваť. Шумасăр!—унăн ěçě çавă, вăл Мишук мěнле çывăрнине пěлмест, пěлесшěн те мар.. Ав, Мишук темшěн ěнтě хыттăнах !ахлата пуçларě.
—Ах, ах!.. А-ах!.. Ыратаť... Ах,-а-а-ах!..
Мишук тěлěк кураť мěн. Ěç Шуйттан-кăсси Йалтрара (Вăрнар р.) пулаť пек. Çак йала таçтан муртан Карамаликкăв сěтěрěнсе пынă. Хăй ђěнсе те ђěнмест. Мăнкăмăлланнă. Çынсем йалěпех варпа аптăранă. Мишукăн та вар пăрсах кăлараť. Мишук Илпеш йалěнђи (Шупашкар р.) Иван Иванђ пўртěнђе пек... Иěри-таврара вěçěмсěр ахлату. Пур те Кармаликкăвпа вăрçаççě.
— Ах, ах, ах!.. Вар ыратаť...
Мишук варне тытса пěрре хутланаť, тепре ђăсăлаť... Тăраť те, выртаť те... Хырăм çине те выртаť, çурăм çине те, айăк çине выртаť, анђах вар таталсах кайаť. Такам пăђкăпа татнă пек ыратаť... Пěрре хырăмра такамсем парлашапа ђупнă пек, тепре тимěрçсем пинě-пинěпе пăта çапнă пек туйăнса кайаť... Кулаксем сенкěсемпе ђикнě пек те туйăнаť... Мěн кăна пулмасť-ши? Мишук пěрре тула тухаť, тепре пўрте кěрет. Мишук çěтěк михе пек... Çěтěк михере тырă тăмасť, икě пуçěнђен те йухаť... Анђăх михěн варě çук, унăн кěçěр варě ыратмасť... Мишукăн вар пур, унăн тўсме çук вар ыратаť, Мишук варне Карамаликкăв пуçлăх пулса тăракан столовăй апађě кăшламаллипех кăшлаť. Мишук кěç-вěç вилес пек йаваnаť. Ун патне Кěçěн Йелђěкри врађсем те персе çитрěç... Ун таврашěнђе Расумăва, Матвейěв... Вěсем Мишук хырăмě çине, çурăмě çине тěрлěрен-тěрлě тăрпасене лартаççě... Хул айне кратуçнěк ђикеççě... Мишукăн шăлěсем пěтěмпех шанса кайрěç. Куççулěсем шăпăртатса йухаççě... Хăй ăшěнђе:—Ку тěлěкре марши?—тесе те шутлаť... Унђђен те пулмарě Мишук варě ыратнипе пěтěм çут-çанталăк ханкăртатса арканса кайрě... Врађсем те вилсе пěтрěç... Вěсен кěлеткисем кěл пек пулса кайрěç, кěл пек пулса çилпе вěçсе пěтрěç... Столовăй пуçлăхě те пěтрě... Кайран унне хăрах пěççине Шупашкарта хěрлě плошђěтре тупнă.. Никам та пěлмесť...
— Кам пěççи та, кам пěççи?—теççě Шупашкара темиçе çěр çухрăмран пынă ђăвашсем. Пěлеймерěç. Çавăнпа та ăна „Капкăн“ муçейне илсе кайрěç, Унта Иван Муђи çеç вăл мěнле етем пěççи пулнине тěпě-йěрěпех каласа пађě.
— Ку Кěçěн-Йелђěкре столовăй пуçлăхě пулса пурăнакан Кармаликкăв пěççи—терě вăл. Карамаликкăв столовăйри апата пěрре те йусама тăрăшман, çынсене çав усал апатах çитернě, вěсен варěсене сахал мар ыраттарнă...
Кун хыççăн вара Шупашкарти тěп хор ратио тăрăх массăллă йурăсем йурлама пуçларě. —Тăнлăр!.. Мусăкě Лискăвăн... Сăмахěсем такамăнђђě... Хорпалан Ваççили Петровиђ йертсе пыраť...—терě пěри. Карамаликкăв усал апат сутни çинђен те йурларě.

Çав-çав çěрте çав çěрте
Кěçěн-Йелђěк йалěнђе
Карамаљик пурнаť, тет.
Карамалик-маликкăм,
Пурăнаť те пурăнаť.

Унта пур, тет, столовăй,
Çак столовăй пуçлăхě
Карамалик пулаť, тет.
Карамалик-маликкăм,
Унта пур, тет, столовăй.

Столовăйě пит йапăх,
Йапăхран та вăл йапăх,—
Асăнтараť çынсене...
Карамалик-маликкăм,
Асăнтараť çынсене...

Карамалик йашкинђен
Йерет çынна хăруш ђир—
Вар ыратаť тўсме çук..
Карамалик-маликкăм,
Вар ыратаť тўсме çук...

Йашка пăсаť хырăма,
Йашка „çийет“ çын варне,
Мěнле усал йашка вăл?
Карамалик-маликкăм,
Мěнле усал йашка вăл?

* * *

Тěттěм каç Кěçěн-Йелђěк урлă хăйěн ěмěрхи çулěпе иртсе кайрě. Катари хěвелтен ылттăн тěслě çутăсем килсе ўкрěç. Мишук хăраса вăранса кайрě. Хăй йěп-йěпе, кěписем лăђă-лăђă. Кěлетки унăн ђул пек йавăр, пуç ыратаť... Вар та тěлěкре кăна ыратман мěн, вар ђăнах та ыратнă. Халě унăн варě хырăмра йěплě хулă сăтăрнă пекех ыратаť.
— Мěншěн вар ыратаť, мěн пулнă ман вара?—тěлěнсе ыйтаť Мишук хăйěнђен хăй. Йулашкинђен çеç Мишук тавçăрса илђě.
— Каç столовăйěнђе апат çирěм... Çав апат ěнтě манăн нихçан ыратман вара кăшларě... Пăлхав турě.. Шăлсем те манăн шанса кайнă... Ех, апат, апат!..

* * *

Кăнтăрла Мишукпа Пашук каллех пěр-пěрне тěл пулђěç. Сăмах хыççăн сăмах пуçланђě.
— Ну, мěнле?
— Мěн?
— Фељйеттон...
— Какуй-ха фељйеттон унта... Варпа ђуť кăна вилсе каймарăм... Ех, мăнтарăн варě тўсрě çав...
— Есě те варпа аптăрарăни?—терě Пашук.
— Епě те...
— Ну!..
— Вăт ну...
Мишукпа Пашук хăйсен варěсем ыратни çинђен каласнă хыççăн, унăн сăлтавě мěнтен килнине шырама пуçларěç. Вěсем пуçсене нумайах çěмěрмерěç
— Вăт йашка тăк йашка!—терě Пашук.
— Купăста йашки...—терě ун хыççăн Мишук, хăйěн пушă варне тытса. Мишукпа Пашук, йěритавра пăхса илђěç. Вěсен куçě тěлне столовăй тěл пулђě, анђах вăл упа пек сиввěн курăнђě.
Çакăн çинђен вара пирěн Мишук фељйеттон çырђě. Есěр ăна вулаттăр та ěнтě.
— Карамаликкăв пек çынсем пирěн хушăра сахал мар.—теттěр есěр.
Епě те калатăп:
— Столовăйсен çитменлěхěсене пěтерессишěн кěрешер!

Кěçěн-Йелђěк, 18 IV-32 ç.

# Çĕнĕ çуркунне



1931-мĕш çулхи çуркунне пулнă. Кăркка Елекçи прикати „Типварпуç“ йатлă уĕаска сӳрелеме тухнă. Сӳрисем муклашкаллă çĕре ĕĕрсе пыраççĕ. Ывăнма пĕлмен тимĕр шăлсем кăвакрах тăм муклашкисене кышлаççĕ, пĕĕĕк вир пĕрĕисене ĕмĕрлĕхех çĕр айне майлаштарса пытараççĕ. Лашисем уçăлса çӳренĕ ĕухнехи пекех çăмăллăн утса пыраççĕ.

Тĕлĕнмелле: кашни вунă пусăм каймассеренех лашисем çăмăллăн та çăмăллăн, хĕрӳллĕнтерех утма тытăнаççĕ.

Ара акă мĕншен вăл çапла пулнă: кашни сӳрен шăлĕсенĕенех пĕлтĕрхи курăксем, тымарсем, хăмăлсем çакланса пынă.

Кĕçтекки хăйĕн сӳри çинелле ĕалăшăн пăхса шухăшласа пынă:

— Ай-ай, мĕн ĕухлĕ çакланса тулнă! Авă мĕнле ĕçлеççĕ вĕсем шуйтансем: пĕр çӳпçаппа та тасатман. йĕксĕксем!

Кĕçтенкки прикатăри хăй çумĕнĕерехри колхоçнĕкран ыйтаť кăшкăрса:

— Кам прикати ку уĕаска малтан сӳренĕĕха?

— Петĕр Йăванĕн пулмалла. Те Кăрлик Павалĕн. Тĕрĕссипе пĕлейместĕп вара.

— Шуйттансем!

— Мĕншĕн есĕ вăрçатăнха вĕсене.

— Çӳпçап мĕн ĕухлĕ. Курмастăни.

— Нта!

Кĕçтенкки татах хăйĕн сӳри çине ĕалăшăн пăхрĕ: çӳпçап татах нумайланнă, хытхурасемпе сӳре шăлĕсем курăнмийех пулнă.

— Йе кăларса пăрахаси кусене?—тесе шухăшласа илнĕ хăй.

Лашине тăратнă, анĕах сӳре шăлĕсене тасатас вырăнне, прикатир йеннелле тăрса кăшкăрнă:

— Ей, пуçлăх! Ĕĕлĕм туртма ларас пирки мĕнле ĕçсем? Вăхăт пуĕ ĕнтĕ.

Кăркка Елекçи прикатир, лутрарахскер, кĕтмен çĕртен, мăн сасăпа, Кĕçтенкки претлошенипе килĕшмен.

— Елкĕрĕнха ĕĕлĕм туртма,—тенĕ вăл сиввĕнтереххĕн.—Акă пĕтĕм „Типварпуçне“ пĕтĕмпех сӳресе пĕтерсессĕн ĕĕлĕм туртма ларма та йураť вара.

Лашисем питте çăмăллăн утса пыраççĕ—сӳре шăлĕсем таксанах çĕре ĕĕрме пăрахнă. Уй тăрăх сӳре шăлĕсем мар, пĕлтĕрхи тип хытхурасем кăштăртатнă. Вĕсем çĕре шăлса çеç пынă, йĕтем шăлнă ĕухнехи пекех тăрăшса шăлнă. Вир вăрлăхĕсенĕен çурри ытла çĕр пиĕĕ çинĕех, пытарăнмасăрах йулса пынă.

* * *

Пĕри хыççăн тепри çурхи кунсем иртсе кайаççĕ. Ӳсет вир, унпа пĕрлех ăмăртмалла кирлĕ мар тĕрлĕ çумкурăксем те ӳсеççĕ.

Халĕ ĕнтĕ Тавит Ваçки прикати çав уĕастăкĕ çине ĕçлеме пыĕĕ. Çум çумламалла.

— Ну, хĕрарăмсемпе мушиксем! Пуçлар пулĕ,—тенĕ шĕвĕр сăмсаллă, шĕвĕр сухаллă Тавит Ваçки.

— Мĕн пуçламалли пур ăна, пуçласассăн усси пулĕши вара? Пăхха мĕнле кукшаланса ларнă вăл. Çĕрнĕ штоĕ.

— Çĕресси темле те, лайăх сӳремен пулмалла. Шуйттансем, мĕнле ĕçлеççĕ. Намăса та, пĕлмеçĕ хăйаматсем!

— Кам прикати сӳренĕши кăна?

— Кăркка Елекçин пулмалла. Те Хура Йăванăнха, аçтан аса илейĕн ĕнтĕ халĕ?

— Ну, хăтасемпе тăхлаĕăсем, каласма, ăçта есĕр, епĕ ăна пĕлетĕп!—терĕ прикатир.—Пуплешсе тăма килмен епĕр кунта. „Сӳренĕ-сӳренĕ“. Кам сӳренипе пирĕн ĕç çук. Пирĕн хамăрăн нормăна тултарса пултăр.

Прикатă „Типварпуç“ уĕасткă тăрăх сапаланса кайса ĕçлеме тытăннă вара васкаса.

* * *

Çарансем çулĕĕç. Кĕр акнă тырсене те колхос пуçтарса кĕртрĕ уйран. Вир вырма вăхăт çитрĕ.

Петĕр Мархви прикати çурласемпе „Типварпуçне“ пыĕĕ. Мархва выракансене вырăн кăтартса паĕĕ те хăй малалла карĕ.

— Мĕнле вир пулнă кунта кăçал!—тенĕ Çемен Натĕли.—Çурлапа та çавăрса тытмалла мар.

— Çумлас пулаť. Алăпа çумламалла.

— Кам прикати кунта çум çумланăши. Çумсене пĕртте тасатман. Вирĕнĕен ытла çум нумайтарах.

— Тавит Ваççин пулмалла. Те Попрĕк Варваринха...

— Ĕçленĕ, калама та çук „лайăх“. Харам пырсем!

— Намăса пĕлменскерсем!

Çурлапа „Типварпуçĕн“ çуррине çеç вырнă. Ытти çуррине алпа çумламалла пулнă.

Вирне çапнă ĕухне йĕтем çийĕн хура тусан мăкăрланса тăнă. Вирĕ çĕрпе çурмашар пулнă. Пăтă тусан çимелле мар шăл çинĕе кăĕăртатнă. Вир тухăçĕ „нижесредний“ тесе шутланнă хут çинĕе.

Çуркунне ситнĕ, 1932-мĕш çулхи çурунне.

Кăркка Елекçи прикати хăй уĕасткине сӳреме тухнă уйа.

Вулакан вуласа ку тĕле çитсессĕн аллисене сулассăнах туйăнаť мана:

— Ай, малалла вуламасăрах пĕлетпĕр, истори çĕнĕрен пĕлтĕрхи пек пуçласа кайаť ĕнтĕ: Кăркка Елекçи прикати сӳрине сӳрĕ, Тавит Ваçки прикати çум çумлĕ, Петĕр Мархви прикати вырĕ, малалли те пĕлтĕрхи пекех пулса пырĕ. Пĕлетĕпске вуламасăрах. Вирĕ те кукшалла ӳссе ларĕ, вир тухăçĕ те „нижесреднего“ шутланĕ... тейĕ вулакан.

Çук! Апла мар, йулташсем! Вăтамран нумайрах пулаť кăçал вăл колхосăн вирĕ.

Мĕншĕн тесен вир акнă уĕастка кăçал Кăркка Елекçи прикатине ĕçлеме панă. Сухалассине те унăнах сухаламалла, сӳрессине те унăннах сӳремелле, çумлассине те унăнах çумламалла... Апла пулсан вир лайăх пуласси паллах. Уншăн вĕт Кăркка Елекçи прикати ответ тытаť. **Рес—н**

# Йĕплĕ çăмах хыпанансем

## Шăпҫăк—хурҫăка.

Çĕрпӳ райколсойусĕн соотехнĕкĕ Соловйов йулташ (ҫăвашла каласан Шăпҫăк й.) шăпҫăкран хурҫăка пулма ăс тытнă. Вăл ҫăхсене пĕтĕмпех районтан кăларса йарасшăн: сысна ферми тавра 15 çухрăмра ҫăх-ҫĕп пулмалла мар, ҫăхсем ҫир сараççĕ, тесе тути çăварĕнҫен кăпăк кăларса тавлашать.

Ҫăхăсемпе автансем! Пурте Соловйова сăхăр. Сăхăр лайăхрах сăмсинҫен те, тутинҫен те, çăварĕнҫен те, купарҫинҫен те. Сăхсан-сăхсан районран та хăваласа йарăр!

## Йапăх Петров.

Иапăх йамшăкра, теҫҫĕç авал. Анҫах йамшăкра мар иккен халĕ вăл, йамшăкран тухса Ҫăвашсойуса кĕнĕ.

Ҫăвашсойус пиҫеҫĕпе штампĕпе 6-125 номĕрлĕ хут пырать поҫтăпа вĕçсе Куславкка райсойусне. Ахаҫ хут мар, нарет текенни.

**Козловскому райсоюзу нарид №6**

С Ядринского завода „ЯМОЗ“ получите соевое масло на май месяц . . . . тонн, на июнь месяц . . . . тонн В случаа етказа сообщите расчет акредитев, цена 7 рублей за тонну.

ОБ'ЕДИНЕНИЕ ОПТОВОЙ ТОРГОВЛИ: ПЕТРОВ.

Миçе тон илмелле—ҫыхвăрне лартман.

Ку хут Ҫăвашсойусра пӳрократ пуррине пĕлтерет. Пӳрокраҫĕ курттăмăн (курттавай) сутуилӳ пĕрлешӳне пăхса ларать. Вăл пӳрократа вакăн никам та илес çук, курттăмăнах парса йамалла пулать... РКИ аллине

## Ыран пулать.

Хĕрлĕҫутай районĕнҫе пурах ĕнтĕ Турхан йалĕ. Йалĕ кӳрнеклĕскер, çырма хĕррипе сарăлса выртать. Кунта выртакан нумай: çелппо йатлă ăйхă ҫăпти çапакансен правленийĕ те пур. Правленинҫе, такой хура куçлă Йакăткĕн, тата такам-такам шурă хута хуратса ларать.

Пĕринҫе потрайонри уҫиттĕлсем ваҫҫи виçшер метр çитсă уйăрнă. Прикашҫĕксем çак çитсăсене, ырă кумсене кăт та кăт тыттарса, куç хĕснĕ. Вара Урумпа Кумарккинăри уҫиттĕлсем илеймесĕрех шăхăрса йулнă.

— Нимле мерă йышăнма та пултараймастăп,— ответлет Йакăткĕнĕ.

Тата тепĕринҫе—çеҫппона уҫиттĕлсем ваҫҫи çăнăх килнĕ, тесе пĕлтереççĕ. Кайсан:—çук... Тепре çул çинҫе хирĕç пулсан:—пырса ил, тесе сĕнеççĕ. Кайсан:—çук,—теççĕ,—килмен.

Тепĕр виçĕ кунтан:—уҫиттĕлсем тӳллесе илмен пирки çăнăхсене те таварсене те сутнă, тесе пĕлтереççĕ. „Ырă кумисене парса йанă ĕнтĕ“.

Епĕ çакна каласшăн: Йакăткĕнăн куçĕ курман пирки прикашҫĕксем кулак ĕçне тăваççĕ.

— Хăнҫа килет сахăр?

— Ыран.

Сахăр пури?

— Çук?

— Ма çук?

Çакăн пек калаçу та пулкалать шеремет Турхан çеҫппо оттеленийĕсенҫе. Йакăткĕн пуçĕ портфĕлшĕнҫе харлаттарнă хушăра, приккашҫĕкĕсем тытаççĕ те сутаççĕ, кайран сăра ĕçеççĕ.

Пай укçине те пухмаççĕ. Екей, авансcем çинҫен çăвар та ан уç! Хресҫенсем: улталаççĕ вĕсем, прикашҫĕкĕсем çавах кумисене анҫах параççĕ, ма укçа пустуй тăкас,—текелеççĕ.

— Е-хе,-хей, Йакăткĕн! Ĕçўсем çине пăхсамҫҫĕ Пăхха ĕçўсем йĕплĕ хурана кĕрсе ӳкрĕç.

— Е—хе—хей.

**М. Кашлинкв.**

## Пионер пулайман.

Йĕпреç районĕнҫи „Ҫăваш пионер“ колхосĕ ҫленĕсем сысна какайĕ тесен пĕлĕт çинҫен татăлса анма та хатĕр, анҫах сысна сене пăхма йуратмаççĕ. Вĕсем выҫăх апаҫĕ çителĕклĕ туман пирки, сысна сене наҫарлатса йанă.

— Ăс кĕрет-ха вĕсене.

— Хăçан?

— Сысна какайĕ йашки вырăнне, йĕплĕ çăмах йашки çисен.

## Ăмăрту.

Тушкасси (Йетĕрне районĕ) колхос претçетаттĕлĕ Шаттайĕв Хветĕр, сотсиалисăмла ăмăртува пуçарса йарас тесе, колхос тыррине сутма кайсан Йурĕнтан таврăннă ҫухне Мăн Ҫурашсемпе, камăк лаши вăйлăрах ҫупать тесе, ăмăртмалла ҫупса ла шипе арман пĕвине кĕрсе ӳкнĕ. Урапи, ут хатĕр сем çĕмĕрĕлсе кайнă. Темле лаши вилмен. Ку ĕ акма кайнă вăхăтра пулнă пулин те, ака ăмăртăвĕ теме май килмест ăна.

Шаттайăв „шаттатсă тăвать“. Хăлхинҫен вĕрсе ă кӳртмелле пуçне.

## Вырăнĕ лайăх.

„Ни Санин“ çырать:

Вăрмарти ветвраҫ сывăрать çемçе тӳшек çинҫ сиктерет ăна сăпкапа Вăрмар райĕçтăвкомĕ, Кол хоссойус та тăханнă оҫки, аçампа хуплать ăна ла йăхрах сывăртăр тесе.

Колхос тавар фермисем ҫирлĕ выҫăхсене пăхм ҫĕнеççĕ. Вăл:

— Пырăпха ыран. Пайан йерçу çукха,—тес ответлет.

Пайан иртет, ыран иртет, тепĕр кун та иртет Çеркей Максимăҫ çапах çук.

— Ăçта вăл?

— Пырăпха ыран, тесе лармалли вырăн ларать.

## Йумах пуçламăшĕпе вĕçĕ.

— Пĕр старик пурăннă. Унăн виçĕ ывăл пулн Пĕри ăслă, тепри сысна пăхакан.

— Суйа! Ухмаха сысна пăхакан тумаççĕ.

## Тасалăхшăн „тăрăшакан“.

— Мĕн есĕ аттуна сĕтел çине хурса тасататă

— Атă та манăн тасалăха йуратнăран.

# Макçăм çырăвĕ

Çурхи çанталăкăн илемлĕ тĕсне хаклама нимĕнле çыруçă-калавçăн сăмахĕ çитеймĕ ĕнтĕ.

Илемлĕ вăл. Ун сăнĕ тапаланакан ҫĕр ҫунсемшĕн çав тери хаваслă. Епĕ хама çавăн пек шутлатăп... Çурхи çанталăкăн ҫеҫеклĕ сăн питне ман ҫĕре савнă ҫул, тепĕр каҫҫă хăй çумĕнҫи сар хĕре те тăп-тăп савса лăпкăн аҫашлаймĕ. Çав тери кăмăллă вăл мана çурхи çанталăкăн ылттăн сар хĕвеллĕ илемлĕ кунĕ.

Ытла та уçă... Хаҫ, хаҫ таврари сĕм вăрман йешĕл тум пĕркенсе пĕтĕм ҫĕр ҫуна хăйĕн тутлă шăршине пĕрĕхсе кăкăр туллин антăхтарса çăттарассăн туйăнать. Хаҫ, хаҫ шăнкăрҫăсем килсе, кăвак тӳпере тăрисем ҫĕвĕлтетсе çĕнĕ йурă--çуракки йурри сăвăласа кĕвĕлеççĕ...

I.

Хуралкка трийĕр çавăрса тăнă пулнă ăна пушталйун кăвак канвертлă çыру тыттарса хăварнă ҫухне. Канвертăн айалти кĕтесĕнҫе:„ „Ҫулхула—Автосават—Макçăмран“ тесе паллă тунине вуласан, Хуралккан хĕрлĕ сухалпа витĕннĕ тути темĕнле çемçенĕн çӳхелсе кулса илҫĕ.—Кайрĕ те, манҫĕ тесе еп... çапах çырать иккенха... ик уйăх ытла çырманҫĕ, тенĕ май, çырăва хутласа шалти кемнаççтеркка кăсйине ҫикме пикенҫĕ.

— Макçăмран мари?

— Çавăнтан... ответлерĕ Хуралкка, прикатир ыйтнине хирĕç.

— Ай-ай, пĕлесҫĕ... мĕнле ĕçлетши пирĕн унти прикатă, пĕлесҫĕ, Хуралкка пиҫҫе... вуласа памăни... ҭем çекретах çук тăр.

— Ĕç, ҫаранатха. Вуласса вулăпăр.

— Ниҫҫово... пĕр меслете...

Кăвак канверт ăшĕнҫен Хуралкка симĕс ҫернилпа тĕрленнĕ шур хута тăпăлтарса кăларҫĕ. Ун тавра колхоçнĕксем кĕпĕрленсе сăрса илҫĕç. Пурте итлесшĕн. Пурте икĕ уйăх малтан хăйсен колхоçĕнҫен Автăсавăта кайнă прикатăн ĕçне тĕплĕн пĕлесшĕн.

Ваççук мĕнлеши, пирĕн Ваççук,—тесе шухăшласа тăрать ватă Урине.

— Пурте пĕрлехши... ай пĕлесҫĕ.

Хуралкка вулать:—„Атте, анне! мĕнле пурнатăр? Колхосран йанă прикатă сывă çитрĕ, пурте пĕрле пурнатпăр—пĕр сивĕ паракра... Атте! сана епĕ çакна пĕлтересшĕн. Есĕ тархасшăн хаҫтерех колхоср..."...малалла вулама ҫаранса Хуралкка хăмлатса ӳсĕрсе илҫĕ.—Çук ĕнтĕ, аҫасемсĕр... вулайăп урăх.

— Вулаха, вула... Ваççук мĕнлеши?

— Мĕнле „колхосра" терĕн есĕ.

— Çук... „Колхосри вăрлăхсене суртламашкăн васкăр" тет вăл,—тесе сăмаха йăвашшăн çавăрса суҫĕ Хуралкка,

— Апла марха та...

— Та-а-а...

— Çыру интерреснă.

Трийĕр каллех çаврăна пуçларĕ. Колхоçнĕксем васкавлăн хавкаланаççĕ. Тӳперен хĕвелĕ вăрăм шупка пайракасемпе хăлаçланса вĕтелет.

2,

— Çыру... Макçăмран, терĕ алăкран кĕрсенех Хуралкка,

— Макçăмран,—терĕ те Васса инке лăпкăн кулса илҫĕ.—Калап çыру килет тесе... Çĕр каç тĕлĕкре курсаҫĕ епĕ ăна. Шап шурă кĕпе тăхăннă, пек, тăхăннă пек те...

Хуралкка çырăва вула пуçларĕ.— „Есĕ тархасшăн хаҫтерех колхосран тухма тăрăш. Унсăрăн кунта пире ҫĕр вилĕм. Кунсерен хĕнеççĕ. Кашни вырăс тĕл пулмассерен,—„ей, потлес колхоçнĕк" тесе урам урлăшĕнҫен ахăрса кăшкăрса иртсе кайаççĕ. Пирĕн колхосран килнĕ прикатăна пĕр сивĕ хупран тунă парака хупса хуҫĕç. Самăй тăвăр ĕçе ĕçлеттереççĕ. Укçине килес çулсăр та памаççĕ пулĕ. Атте! Ăçтан та пулсан йӳнеçтеркелесе укçа тупса йарайманши. Киле пырасҫĕ. Ахалĕн кунта вилетĕп епĕ. Курас киле пуçларĕ ĕнтĕ сире те. Как нипуть укçа тупса йарăр. А, колхосран пайанах тухăр. Ваççуксен çемйисене те кала,—вĕсем те тухҫăр".

Хуралкка çыру тытнă аллине тăснă май, ҫĕтрентерсе ҫылайҫҫен çăварне карса пăхса тăҫĕ. Пуçне пăркалать.

— Каларăм та çав,—тесе нăшăклатса ĕсĕкле пуçларĕ Васса инке.—Каларăм, ан кай тесе. Хăй вĕт .. Хăй прикатир пулса кайрĕ. Ак ĕнтĕ хаҫ.

— Пета савçим,—тесе хĕрлĕ сухалне йапшарăн шăлса илҫĕ Хуралкка.—Ĕнтĕ мĕскер сутас... ăçтан тупса йарас укçа?

3.

Пĕлместĕп .. Ĕнине мĕн сăлтавпа сутнăха Хуралкка? Пĕртен пĕр пушмак пăруне йӳн хакпах сутса йаҫĕ Ваççук... амăшĕ Урине те. Мĕншĕнха тата колхосран тухма ыйтусем паҫĕç вĕсем иккĕш пĕр харăс...

Ҫылайҫҫен тарăн шухăша путса тĕлĕнсе ларҫĕ колхос претçетаттĕлĕ, Хуралккасем панă ыйтусене çавăркаласа тытса ларнă май.

— Макçăм... Ваççук пирĕн колхосри паллă активиссем. Колхосăн малтанхи органисаттăрĕсенҫен пĕрисем вĕт вĕсем. Апла тăк пайан кун мĕншĕнха çак тери киревсĕр карттинăсем кăларса тăратаççĕ вĕсен ашшĕ—амăшĕсем.

Çав вăхăтрах алăкран кĕрекен сукна паҫттуллă çынна Макçăм иккенне ҫасах палласа илҫĕ претçетаттĕл.

— А... а .. а! Сторовă, сторовă!...

— Сторовă та, стороваx та мар.

— Пĕлетĕп ĕнтĕ .. пĕлетĕп.

— Тĕлĕнетĕп. Макçăм, мĕн хăтланать-ха аçу санăн. Тен сана пĕлтермен тăр вăл.

— Акă пăх... Пирĕнпе тăшмансем сĕлеке йухтарсах кĕрмешеççĕ кирек ăçта та. Мĕнле кăна ăсласа çырнă. Кам ĕненес çакă çырăва?..

Претçетаттĕл Макçăм панă çырăва вуласа тухсан, тĕлĕнсе хытнă май, ленҫĕрех шанса кайрĕ.—Вара хамăр йал Мирун алли вĕт ку. Кулак аҫи Мирун çырнă ку çырăва. Тем тесен те çавă.

— Çавăн, çавă. Епĕр ăна Ҫулхулара тĕл пултăмăр. Вăл иртнĕ çула Автăсавăтра хĕсĕнкелесе ĕçлесе çу каçнă. Хаҫ тата малалла кайатăп,—терĕ.

— Вара çак çыру тăрăх ĕнесене сутса йанăшим ĕнтĕ... Ҫăн çавăн тăрăх. Ĕне сутнă укçисене пирĕн пата куçарҫĕç. Ваççукпа иксĕмĕр те тĕлĕнсе хытса лартăмăр. Килме калаççĕ. Йулашки ĕне




**Кун йышши, тата ытти çумкурăксемпе „Капкăн“ 7 çул кĕрешрĕ, малалла та вăй çитнĕ таранах кĕрешсе пырĕ. Пурте „Капкăн“ потписчĕкĕ пулăр, кашни уйăха 15-шер пус укçа ан шеллĕр!**

-утнӑ укҫисене куҫаратпӑр,—хӑвӑртрах килме тӑрӑшӑр тесе ҫыраҫҫӗ килтен.

Макҫӑмпа претҫетаттӗл ҫылай калаҫса тӗлӗнсе ларнӑ хыҫҫӑн, колхоҫнӗксене пухса ку ирсӗр сӑлтавсӑр ӗҫ ҫинҫен тӗплӗн ӑнлантарас, тесе татӑклӑн шухӑш тытрӗҫ.

4.

Тулта ҫанталӑк усӑ. Тӳперен хӗвел пайӑркисемпе хлаҫланса йура кышласа шӑрантарасшӑн вӗтелет.

Урампа колхоҫнӗксем вулав ҫурҫӗ йенелле пухӑва утаҫҫӗ. Пухура Макҫӑмӑн Автӑсавӑт историйӗ ҫинҫен каланакан токлатне сӳтсе йавмалла. Ҫавӑнпа та колхоҫнӗксем пысӑк шанҫӑклӑ ӗмӗтпе ӑмсанса утаҫҫӗ пухӑва.

Вӗсен хушшинҫех Хуралкка та колхоҫнӗксене автӑрӗ кулак аҫи пулнӑ „Макҫӑм ҫырӑвӗ" пирки хӗрлӗ сухалне сиктере-сиктере калаҫса пырса тӗлӗнтерет.

**Митта Петӗрӗ.**

## Аҫин аҫи

Хапха алӑкӗ кӑриклатрӗ. Ват карҫӑк Униҫҫе алӑк умне тухса тӑҫӗ. Вӑл тӗксӗм пӗлӗт ҫинелле пӑхса илҫӗ, унтан сӑхсӑхрӗ те, йерипен пылҫӑклӑ урам тӑрӑх мӑн калушӗсемпе лепӗшлеттерсе малла карӗ.

— Тумаллах,—тет карҫӑк хӑй ӑссӗн мӑкӑртаттарса,—тутарасах пулат. Ӑна вара турӑ пулӑшӗ... туррӑсӑр ӑҫтан...

Сопор ҫиркӳ патӗнҫеУниҫҫе карҫӑк тепӗр карҫӑка тӗл пулҫӗ. Лешӗ кунтан темӗскер ыйтасшӑнҫӗ те, анҫах Униҫҫе карҫӑк унӑн ҫумӗн пит васкавлӑн иртсе карӗ. Воҫтвишӗнски пупа курнӑ пулнӑ вӑл.

Карҫӑк хыҫалтан пырса пуп ҫаннинҫен тытсан, пуп ҫавӑрӑнса тӑрса ыйтнӑ карҫӑкран:

— Мӗн сана?—тенӗ.

— Паҫӑшкӑ,—тенӗ карҫӑк хӗрелнӗ куҫӗсене мӑҫ-мӑҫ хупкаласа,—молепӗн туса парха... турӑ ҫури Ваҫҫили шкулта лайӑх вӗрентӗр тесе тӑвасҫӗ... Ывӑлӑн аҫи пур манӑн, Ваҫҫили йатлӑскер. Халӗ вӑл универҫитета кӗнӗ вӗренме, ҫыру йанӑ. Универҫитетах кӗнӗ... молепӗн тӑвасҫӗ.

— А!—мӑкӑртатса илнӗ Воҫтвишӗнски.—Йурат.

Молепӗн хыҫҫӑн Униҫҫе карҫӑк Воҫтвишенскийе укҫа пама кӑсйинҫен тутӑр кӑларса салатма тытӑнат.

— Апла ӳниверҫитетра вӗрентет еппин?—тенӗ укҫа кӑларасса кӗтсе Воҫтвишенски.—Тухтӑр пулма вӗренетиха?

— Ваҫкӑ-и? А—а, тухтӑра мар!—аллине сулнӑ Униҫҫе—Вӑл антирелигиоснӑй (тенӗ хирӗҫ) универҫитета кӗнӗ. Вӗсем Петтӗн Коҫккипе пӗрле вӗренеҫҫӗ...

Воҫтвишӗнски Униҫҫе карҫӑк ҫине ҫӑр пӑхса илнӗ сиввӗн.

— Ай—йай, мӗнле ес,—тенӗ пуҫне сулласа,—ай—йай!.. ҫапах та виҫӗ тенкӗлӗх хут пуп кӗсйине кӗмесӗр хӑтӑлайман.

**М. И.**

## Сысна пӑхакан

„Октапӗр" колхосра (Йетӗрне р.) сыснасене кашни кун уйрӑм сыннӑ.



— Сирӗн колхос ферминҫе сыснасене кам пӑхат?
— Опеслиҫкӑ.

## Ҫатракри Йаррус

Ҫатрак йалсовет претҫетаттӗлӗ ҫураки вӑхӑтӗнҫе кулленех ӗҫкӗпе аташса иртернӗ. Пахҫа картисене ҫапса ҫӗмӗрсе ҫӳренӗ. Пур кампанисенҫе те найанланса ӗҫлет.

Ылттӑн тӗслӗн ҫут хӗвел йарӑм йарӑмланҫӗ
Йалсоветӑн пуҫлӑхӗ ӗҫкӗпе тусланҫӗ.
Кӑсйинҫе ун йаланах ерех—пулпутылккӑ
Вӑхӑт ҫук ӗҫне тума—
Мӗн тӑвашши тоҫккӑ.
Ҫапла вӑхӑт ртерме
Халӗ питӗ намӑс.
Ерех вырӑнне тыттарар
Пӑрӑҫланӑ кӑмӑс.

**Атлаш Ҫ.**

Сдано в производство 19-II-32 г.
Подписано к печати 13-III-32 г.
Врид. редактора И. Павлов
Секретарь журн. И. Илларионов

Вӑхӑтлӑха ответлӑ ретактӑр **И. Павлӑв.**

Ст. ф. Б. 200×285. Об'ем 1 п. л. 112.000 п. з. в п. л.
Изд. газ. „Канаш".
Уполн. Чувашлита № 772. Чебоксары, тип. № 1 Чувашгиза. Заказ № 807 Тираж 9300 экз